

# Çар – пурнăç шкулĕ

Юпа, 26, 2023
Таван Ен
№ 42 (11209-11210)

Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать

**Ача чухне Сергей Арсентьев дальнобойщик пулма ĕмĕтленнĕ. «Мана массăллă информаци хатĕрĕсемпе фильмсем çак енне явăçтарчĕç пулмалла. Ку маншăн романтика евĕр туйăнатчĕ. Машинăра пурăнатăн, çĕршыв тăрăх çӳретĕн, тĕрлĕ çĕре çитетĕн. Тен, çавăнпа та эпĕ çар тивĕçне пурнăçланă хыççăн Мускаври автомобильпе çул-йĕр патшалăх техника университетне вĕренме кĕтĕм», – аса илчĕ вăл.**



С. Арсентьев архивĕнчи сăн ӳкерчĕк

С. Арсентьев

Паянхи кун Сергей газ валеçекен организацинче тĕп диспетчер службин ертӳçинче вăй хурать. Унăн пăхăнăвĕнче аварипе диспетчер службисем. Çар тивĕçне Сергей шалти çарта (халĕ Росгварди) пурнăçланă. «Арминче мана контрактпа малалла çар тивĕçне пурнăçлама сĕнчĕç. Мана Чечня Республикине командировкăна ячĕç. Эпĕ çар заданийĕсене 2005 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа 2006 çулхи раштав уйăхĕччен пурнăçларăм. 2007 çулхи май уйăхĕнче демобилизациленнĕ. Тăван Кӳкеçе таврăнсан вара газ валеçекен организацине ĕçлеме вырнаçрăм», – каласа пачĕ вăл.

Сергей Шупашкар муниципалитет округĕнчи Çурçĕр Кавказри хирĕçтăру ветеранĕсен пĕрлешĕвĕн йышĕнче тăрать.

2003 çулта Кӳкеç лицейĕнчен вĕренсе тухсан Сергей Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине «ял хуçалăх техникине эксплуатацилесси» специальноçпе вĕренме кĕнĕ. Çур çул вĕренсен вăл ку професси ăна килĕшменнине ăнланса илнĕ. «Эпĕ аттепе аннене вĕренме пăрахса хамăн ирĕкпе салтака тухса каясси çинчен пĕлтертĕм. Аттепе анне мана тĕллевлĕн вĕрентес тĕлĕшпе тăрăшрĕç. Çакăнта вĕсем умĕнче хамăн айăпа та туйрăм. Хĕсметрен таврăнсан Мускаври автомобильпе çул-йĕр патшалăх техника университетĕнче куçăн мар майпа вĕрентĕм. «Турттару ĕçне йĕркелесси тата транспорт управленийĕ» специальноçе алла илтĕм. 2020 çулта Ĕпхӳри патшалăх нефтьпе техника университетĕнче професси хатĕрленĕвĕ витĕр тухрăм», – терĕ вăл.

### ПУР АРÇЫННĂН ТА САЛТАКРА ПУЛМАЛЛА

Мĕншĕн салтак пурнăçне суйласа илме шухăшланă-ха Сергей Арсентьев? «Манăн атте çарта пулнă. Асатте-кукаçи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çапăçнă. Кирек мĕнле арçыннăн та салтакра пулмалла. Манăн пурнăçра çапла пулса тухрĕ: мана контрактпа службăна малалла тăсма сĕнчĕç. Нумай шухăшласа тăмарăм, килĕшрĕм», – аса илчĕ вăл.

Сергей Ростов облаçĕнчи Октябрьски районĕ никĕсĕнче йĕркеленнĕ 100-мĕш опердивизин шалти çарĕсенче 46-мĕш полкра служба ирттернĕ. Вĕсен дивизийĕ 3 полкран тăнă: 46-мĕш, 47-мĕш, 48-мĕш. Вăл Чечняран тухман. «Пирĕн дивизи 1995 çултанпа Чечняра пулнă, полксем улшăнса кăна тăнă. Шăпах 2005 çулта пирĕн полка Чечняна кĕме черет çитрĕ» – малалла тăсăлчĕ калаçу.

«19 çулти каччă вăрçă хирне тухма хăраман-и?» – çакна та ыйтса пĕлес килчĕ пирĕн геройран. «Эпĕ кăшт лăпкăрах çулсенче служба ирттернĕ. 2005-2006 çулсенче тӳрĕ хирĕçтăрусем пулман. Пире хирĕç диверси вăрçи çеç пынă. Пире сирпĕтетчĕç, тӳррипе каласан, вĕсем пирĕн çине тапăнма хăратчĕç, тăшман 5-10 çынран тăракан пĕчĕк ушкăнсене пайланнă. Пирĕн застава, çын шучĕпе çар пуçĕ хыççăн иккĕмĕшччĕ. Пирĕн 74 салтак тата 3 БМП, 2 миномет тата 1 зенитлă установка, 1 АГС автоматчĕ. Урăхла каласан, пирĕн застава пысăк пулнă. Пирĕн умра тĕп тĕллев тăнă – халăх пурăнакан пунктра хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси. Чечняран таврăнсан эпĕ Пĕрремĕш тата Иккĕмĕш Чечня вăрçи çинчен материалсем вулама тытăнтăм. Тĕпчевçĕсенчен пĕри çав тери интереслĕ шухăш палăртнă: «Чи лайăх салтаксем – васкавлă служба салтакĕсем. Вĕсем çемье çавăрман, анчах тăван амăшĕшĕн тăшмана аркатма хатĕр. 18 çулхи яшсем – вĕри чĕреллĕ, хăюллă. Вĕсенчен усси пур. Çапла эпĕ те, 19 çултискер, контракт çырса Чечняна командировкăна тухса кайнă», – пĕлтерчĕ вăл. Сергей çапла шухăшлать: енчен те сывлăх ирĕк парсан пур арçын ачан та салтак атти тăхăнма вăхăт çитсен çар шкулĕ витĕр тухмаллах. Вăл салтакра туптаннă юлташлăх ĕмĕре упранса юлнине палăртать. «Пĕрле служба ирттернĕ юлташсемпе яланах çыхăну тытатпăр. Пирĕнпе пĕрле заставăра Çĕнĕ Шупашкартан Юра Кузьмин та пулнă. Хальхи вăхăтра вăл Мари Элта пурăнать», – терĕ вăл.

### «ПĔЧЧЕН ВĂЙПА ÇĔНМЕ ÇУК»

Сергей Арсентьевăн хирĕçтăру ветеранĕн удостоверенийĕ пур. Хăйĕн çинчен каласа панă май вăл çар тăванлăхĕнчи юлташĕсем çинчен те асăнмасăр хăвараймарĕ. «Пĕччен вăйпа çĕнме çук», – теççĕ. Эпир, тĕрлĕ хирĕçтăрăвăн ветеранĕсем, пĕр-пĕринпе çыхăну тытман пулсан сахаллине те тăвайман пулăттăмăр. Тĕслĕхрен, пĕлтĕр çу уйăхĕнче Шупашкар районĕнчи чикĕ хуралçисем Кӳкеç пĕви хĕрринче – Колхозная урамран Карл Маркс урамне тăвалла хăпарнă çĕрте – Раççей Федерацийĕн тата чикĕри çарсем валли 2 флагштокпа чикĕ юпине вырнаçтартăмăр. Поселокра тĕрлĕ çарсен паллă кунĕсенче Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсемпе пĕрле пуçтарăнмалли вырăн тăвас шухăш çуралчĕ», – каласа пачĕ хирĕçтăру ветеранĕ. Афган вăрçин, Çурçĕр Кавказ тата ытти хирĕçтăрусен, сывлăшпа десант çарĕсен, чикĕ хĕрринчи çарсемпе тинĕс çар флочĕн ветеранĕсем пĕрлешсе кунтах тата тепĕр тăвата ялав: çарпа тинĕс флочĕн, çарпа десант, шалти ятарлă назначени çарĕсен тата çарпа сывлăш вăйĕсен ялавĕсене вырнаçтартăмăр, çавăн пекех çарпа тинĕс флочĕн тата çарпа десант çарĕсен монументне лартрăмăр. «Шупашкар район администрацийĕн пулăшăвĕпе, ун чухне пуçлăх тивĕçне Николай Хорасев пурнăçлатчĕ, «Флагсен аллейин» территорине тирпей-илем кĕртме, видеосăнав вырнаçтарма пултартăмăр», – пĕлтерчĕ Сергей.

Тăванлăхри пĕрлĕх çавăн пекех тĕрлĕ мероприятие хутшăннинче те палăрать. Тĕслĕхрен, Шупашкар районĕн пĕрлештернĕ команди вăрçă хирĕнче пуç хунă салтак-интернационалистсене халалласа Етĕрне тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче мини-футбол, волейбол тата кире спорчĕпе республикăри ăмăртусенче темиçе хутчен те малти вырăнсене йышăннă. Çурçĕр Кавказри хирĕçтăру ветеранĕсен союзĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн председателĕ Николай Алексеев çулсерен Çĕрпӳри аграрипе технологи техникумĕнче (27-мĕш професси училищинче) çар тивĕçне пурнăçласа паттăрла пуç хунă салтаксене асăнса турнир йĕркелет. Ветерансем, паллах, ăна çак ĕçре пулăшаççĕ.

Сергей Арсентьев Шупашкар районĕнчи «Хамăрăннисене пăрахмастпăр». Шупашкар районĕ» телеграмм-каналти чатăн пилĕк администраторĕсенчен пĕри пулнине те палăртмалла. «Пĕлтĕр юпа уйăхĕнче Николай Хорасев ыйтнипе эпĕ ятарлă çар операцине хутшăнакан ентешĕмĕрсене пулăшма укçа-тенкĕ пухмалли ушкăн чатне йĕркелерĕм. Алексей Андреев, Шупашкар уйрăмĕнчи Çурçĕр Кавказри хирĕçтăру ветеранĕсен союзĕн членĕ, тӳрех пулăшу сĕнчĕ. Николай Евгеньевич вара муниципалитет округ администрацийĕнчен пире пурлăхпа техника енчен те, ушкăнри çынсене ытларах явăçтарассипе те çине тăчĕ. Вăл пуçлăхăн тивĕçне пурнăçлама пăрахрĕ пулин те волонтерсене паянхи кун та тĕрев кӳрет. Пухнă укçа-тенкĕпе Алексей Андреевпа Евгений Петров волонтерсем виçĕ автомобиле юсаса пуçтарса ятарлă çар операцийĕн зонине ăсатнă», – пĕлтерчĕ Сергей.

«Чăн геройăн 5 правили» проектăн тĕллевне тĕпе хурса Сергейран хăйĕн пурнăçĕнче мĕнле правилăсене тытса пынине ыйтса пĕлтĕмĕр.

«Пĕрремĕшĕ, çынлăха çухатмалла мар. Этем пахалăхĕсем çинчен манмалла мар. Енчен те эсĕ кама та пулин пулăшма пултарсан – пулăш.

Иккĕмĕшĕ, тивĕçсене туллин пурнăçласси. «Çакна эпĕ салтакра лайăх ăнланса илтĕм. Çар ĕçĕ – чи лайăх пурнăç шкулĕ. Пурнăçлама пултарайман задачăсем сахалланса пынине час-часах асăрхатăп. Çарта лартнă тĕллевсене вăхăтра пурнăçлама вĕрентĕм.

Çакăнтанах тепĕр правило тухать – панă сăмаха тытмалла.

Тăваттăмĕшĕ – арçыннăн хăйĕн ятне ямалла мар. Арçынна арçын ачаран мĕн уйăрса тăрать? Йышăнусемшĕн яваплă пулма пĕлни. Эсĕ хăвăн çемйӳшĕн явап тытатăн: вĕсем хăрушсăрлăхра пурăнччăр, яланах тутă-сывă пулччăр тесе тăрăшатăн. Арçыннăн татăклă юлашки йышăну тумалла.

Пиллĕкмĕшĕ – хăвна ху критикле. Хăвăн ĕçӳсене хăв тишкер. Санпа ыттисем лайăх калаçчăр тесен хăв та вĕсемпе кăмăллă пул».

■ **Юлия ИВАНОВА**

● ПАТРИОТЛĂХ

# Пирĕншĕн – чăн-чăн тĕслĕх

**Раççей Геройĕ Дмитрий Семенов çуралнă кун, юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче, Çĕнĕ Тренккасси ялĕнче мăшăр кĕрешӳ залне уçрĕç, çавăн пекех 2010-2011 çулсенче çуралнă ачасен хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе республика турнирĕ иртте рчĕç.**

Дмитрий Семенов Донецк тата Луганск Халăх республикисене хӳтĕлес тĕллевпе ятарлă çар операцийĕсене хутшăннă. 2022 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче вăл Харьков облаçĕнчи хирĕçтăрура паттăрсен вилĕмĕпе пурнăçран уйрăлнă. Вилнĕ хыççăн ăна Раççей Геройĕн ятне панă.

Кĕрешӳ залне уçнă çĕре чылай сумлă хăна хутшăнчĕ. РФ Геройĕ, Чăваш Республикин спорт кĕрешĕвĕн федерацийĕн президенчĕ Николай Гаврилов генерал-лейтенант, Чăваш Республикин спорт министрĕ Василий Петров, Чăваш Республикин çар комиссарĕ Бахтиер Холиков, Шупашкар муниципалитет округĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Владимир Михайлов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Шупашкар район больницин тĕп тухтăрĕ Владимир Викторов, Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсен çар комиссарĕ Евгений Карпов, Çĕнĕ Шупашкарти ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федерацийĕн ертӳçи Артур Анисимов, Дмитрий Владимировичăн амăшĕ Алина Семенова, мăшăрĕ Ксения Дмитрий Семенов чăн-чăн паттăр пулнине пĕлтерчĕç. Çамрăк ăрăва та ун пекех хастар, патвар пулма сунчĕç.

«Ирĕклĕ кĕрешӳ çынна йывăрлăха çĕнтерме, тĕллеве çине тăрса пурнăçлама вĕрентет. Раççей Геройĕ Дмитрий Семенов çавăн пек пулнă та. Унăн ĕмĕрĕ кĕске пулнă, анчах çутă пурнăçпа пурăннă. Вăл хастар офицер çеç мар, пултаруллă спортсмен, тĕрлĕ енлĕ аталаннă çын пулнă. Дмитрий Владимирович пирĕншĕн – чăн-чăн тĕслĕх», – терĕ Василий Петров министр.




Автор сăн ӳкерчĕкĕ

Шупашкар округĕн администрацийĕ халăха массăллă спорта, физкультура занятийĕсене явăçтарма, çавăн пекех сывă пурнăç йĕркине тытса пыма тĕллевлĕ программăсемпе проектсем çине тимлĕх уйăрнине палăртрĕ Владимир Михайлов, йĕркелӳçĕсене тав турĕ. «Çĕнĕ спортзал ачасене хăй патне илĕртессе шанатăп», – терĕ вăл.

Дмитрий Семенов мăшăрĕ Ксения Мстиславовна çамрăк спортсменсене çитĕнӳ суннă май ывăлĕ Руслан спортăн çак тĕсĕпе кăсăкланнине пĕлтерчĕ. Хăçан та пулсан ывăлĕ çакăнта килсе çамрăк спортсменсемпе кавир çинче тĕл туласса ĕмĕтленчĕ.

Малалла вĕренекенсен хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе республика турнирĕ иртрĕ. Шупашкар муниципалитет округĕн команди унта пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Тренккассинчи Раççей Геройĕ Дмитрий Семенов ячĕллĕ вăтам шкулта паттăра асăнса митинг йĕркелерĕç, ăна пуç тайрĕç.

■ **Валентина МАКСИМОВА**